Николай САНДРОВ

# Юрă сăмахĕсем пирки

Халăх юрă-сăвăсăр пурăнма пултараймасть: юрă ăна уяв чухне те, ахаль чухне те кирлĕ. Çакна пирĕн композиторсемпе поэтсем лайăх ăнланаççĕ, этем чун-чĕрине çĕклентерсе яракан, ăна савăнăçлăрах ĕçleme те ыррăн канма пулăшакан юрăсем çырма тăрăшаççĕ. Тин çеç çырнă çĕнĕ юрăсене час-часах радиопа парса юрлама вĕрентеççĕ, нотисене уйрăм листоксемпе, уйрăм кĕнекесемпе кăларса халăх патне çитерме васкаççĕ. Чăваш кĕнеке издательстви юлашки çулсенче композиторсене ăраснах ăшшăн кĕтсе илет, темелле, паллă композиторсенне çеç мар, çамрăккисенне те юррисене пухса, кĕнекен кăлара-кăлара пачĕ. Кунсăр пуçне «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманах кашни номерте тенĕ пекех икшер-виçшер юрă пичетлесе пыраççĕ, тепĕр чухне «Ялав» тăвата-пилĕк юрăпа тухни те пулкалать. Çаксем ĕнтĕ пурте халăхăн музыкă культурине ӳстерме пулăшаççĕ. Юрă ăсталăхĕ ӳссе пыни вара çулсерен иртterекен юрăпа ĕç праçникĕсенче те лайăх курăнать, савăнтармаллипех савăнтарать.

Пирĕн композиторсемпе поэтсем çырнă нумай юрăсем, халăх хушшинче чăннипех те анлăн сарăлса, унăн юратнă юррисем пулса тăчĕç. Ку тĕлĕшпе уйрăмах П. Хусанкай, Я. Ухсай, И. Тукташ, Н. Васянка, А. Алга, А. Эсхель, Г. Ефимов, В. Давыдов-Анатри, А. Малов, Ю. Скворцов сăввисемпе усă курса çырнă юрăсене палăртмалла.

Халăх чĕрине кĕрсе вырнаçнă чи лайăх юрăсен шухăшĕ те хавхалантарать, илемлĕхĕ те килентерет. Вĕсен чĕлхи — тирпейлĕ те янравлă, унта пĕр ытлашши сăмах та çук.

Тематикă енчен илсен, халĕ ĕнтĕ эпир чухăн мар: пирĕн мирпе халăхсен туслăхĕ çинчен, ĕç çинчен, туслăхпа юрату çинчен çырнă юрăсем пайтах; Коммунистсен партийĕпе Аслă Ленин çинчен, Тăван çĕршыв çинчен хунă юрăсем уйрăмах хăватлăн янăраççĕ.

Çапла ĕнтĕ, чăваш музыкинче ырă сăмаха тивĕç сăвă-юрă сахал мар. Эпир çав юрăсене кашни кун тенĕ пекех илтетпĕр, сăмахĕсене те, кĕввине те пĕлетпĕр, юратса юрлатпăр. Анчах эпир халĕ вĕсене мар, хамăра кăмăла кайман хăшпĕр юрăсене тишкерсе пăхасшăн, вăй çитнĕ таран çитменлĕхсене кăтартса, пĕр-пĕрне çав шăйрăксенчен хăтăлма пулăшасшăн.

Пирĕн поэтсем час-часах композитор ыйтнипе ĕçлеççĕ — кĕвви хатĕр, сăмахĕсене çеç çырмалла. Ĕçĕ йывăр мар пек, анчах çак меслет вăл питех те юрăхсăр меслет. М. Исаковский кун пирки: эпĕ хатĕр кĕвĕ тăрăх темиçе сăвă çырса курнă, анчах вĕсем пурте тенĕ пекех ăнăçлă пулман, эпĕ вĕсене нихçан та хамăн сăвă кĕнекисене кĕртмен, тет. Музыкă вăл юрă чунĕ, унăн çуначĕ. Апла пулсан, çав çунатсен мĕн те пулин йăтса пымалла, çак мĕн те пулин - вăл — юрă шухăшĕ. Музыкă хăй тĕллĕн çеç «конкретлă мар», тет Исаковский. Юрă сăмахĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук пысăкки пуриншĕн те паллă ĕнтĕ, çапла пулин те, эпир час-часах юрă сăмахĕсене çителĕклĕ хакламастпăр, шурă хута чăрчар хуратса хуратпăр та — пулчĕ те! Кун пек чухне, музыки темĕнле ытармалла мар пулсан та, юрă халăх хушшине сарăлмасть...

К. Архиповпа В. Давыдов-Анатри «Ялавăн» 2-мĕш номерĕнче (1962) «Сарпике» ятлă юрă пичетлесе кăларнă. Ăна халăх кĕвви тăрăх çырнă тесе асăрхаттарнă. Апла пулсан, вăл илемлĕ, асран кайми кĕвĕ ĕнтĕ, унăн валли сăмахĕсене те, «сакăр вун сакăр юррăм пур, сар сак çине сарса суйларăм» тенĕ пек, пĕрчĕн-пĕрчĕн пухмалла пулнă. Анчах, ман шутпа, поэт вăл сăвва виççĕмĕш хутран картишне анса çитиччен çырса хунă. Акă вăл сăвă.

Улма пахчинче,
Хĕвел ăшшинче,
Саркайăк юрлать,
Сасси ян каять.

Çăка айĕнче,
Вăрман хĕрринче,
Кĕтет сарпике
Чунĕ савнине.

Анаткас енчен,
Сăрнай катинчен,
Тухрĕ ун каччи —
Кӳршĕ ял ачи.

Çил çук ĕшнере,
Çăка çеçкере.
Эх, мĕнле хитре
Каччăпа хĕре!

Сăвăра çамрăксен савăнăçĕ, телейĕ, юратăвĕ çинчен каланă. «Эх, мĕнле хитре каччăпа хĕре!» тени кăна мĕне тăмасть! Анчах кун пек юрăсем, тĕрĕсрех каласан, юрă пеккисем, пирĕн ытла та нумай ĕрчесе кайнă-çке-ха вĕсем. Çĕнĕ юрă çырма шут тытнă пулсан, мĕншĕн пуçпа лайăхрах шухăшласа пăхмалла пулман-ха ăна! Кама кирлĕ-ха çак сăмахсем, кам чĕри патне пыма, кам чун-чĕрине хускатма пултараççĕ-ха вĕсем,—авторăнне пулсан кăна, урăх никамăнне те мар. Çавăнпа композиторĕн-

чен те: «Мĕншĕн килĕшнĕ-ха эсĕ çак сăмахсемпе?»—тесе ыйтас килет. (Çула май çакна каласа хăвармалла: композиторсенчен пĕр Архипов çеç мар, нумайăшĕ çавнашкал тăваççĕ. Кирек мĕн хыптарсан та çăтса яраççĕ...).

Сăвви пирки тата çакна каламалла. Вырăссем: из песни слова не выкинешь, теççĕ. Кунта вара апла мар. Кунта сăмахсене ним мар улăштарса лартма пулать. Çак вăл япалана пĕтĕмпех конкретлă туманнинчен килет. Паллах, Давыдов саркайăка пахчаран урăх çĕрелле кăларма пултарайман ĕнтĕ, унăн саркайăкĕ «Атăл каччи-хĕрĕсем» юрăра та тĕл пулать, унта та вăл çавăнтах. (Сарă кайăк пахчара, чĕвĕл чĕкеç йăвара»). «Сарпике» сăвăра саркайăк сасси ян каять, «Атăл каччи-хĕрĕсем» юрăра: «Чăпар куккук аватать, сасси инçе ян каять», тенĕ. Çапла вара, икĕ юрра танлаштарса пăхсан, эпир саркайăкпа чăпар куккук ăмăртса юрланине — аватнине пĕлтĕмĕр.

Поэтăн «Сарпике» сăввинче: «Çил çук ĕшнере», тенĕ. Каччăпа хĕре çил çук пирки ырă. Тепĕр чухне çил тухсан та начарах мар, аптрамасть. Акă «Кимĕпе» ятлă сăвăра: «Кăнтăр çилĕ, ăшă çилĕ, эх, вĕрет-çке, пире çупăрлать», тенĕ. Кунта акă кăнтăртан вĕрекен çил килентерет. А. Токаревпа çырнă «Çĕнĕ çĕре» юрăра çил çаврăннине куратпăр: «Хĕвел тухать тухăçран, ăш çил вĕрет анăçран, каяç пĕтĕм çĕршывран», тенĕ. Çил тени поэтăн час-часах тĕл пулать (хамăр чаплă космонавт Адриян Николаев çинчен çырма пуçланă поэминче те пурччĕ-ха, унта та кăнтăртан вĕретчĕ пулмалла!) анчах çурçĕртен вĕрнине эпĕ унăнне пĕрре те асăрхамарăм-ха. Çурçĕр çилĕ сивĕрех те вичкĕн çил, тепĕр чухне ӳт-пĕве витĕрех касса кĕрет, çавăнпа поэт ăна ăшă туйăмлă, лирикăллă пулас пек туйăнакан сăввисене кĕртме шикленет пулас. «Çĕн çĕре» юрăра тата «Çерем уçма, завод тума» тенĕ. Калас пулать, пирĕн паттăр каччăсем-хĕрсем çĕн çĕре çерем уçма кайнă, завод тума мар. Апла калани вăл шухăша сапаласа çеç ярать. Юрăн иккĕмĕш куплечĕ çакăн пек:

Пире хĕрсем, каччăсем,
Пĕрле ӳснĕ тантăшсем,
**Кĕтеç Çĕпĕр сыннисем.**

Поэт кунта тĕп падежра, нумайлă хисепре тăракан япала ячĕсене—«сем-сем-сем»сене рифмăласа тухнă. Ку вăл йывăр ĕçех мар ĕнтĕ. Пĕрремĕш класра вĕренекен шкул ачине рифмă мĕн иккенне ăнлантарса парсан, «лашасем», сăмахпа рифмăлакан сăмах тупма хушсан, вăл часах «ĕнесем», «сурăхсем», «качакасем» тата темĕн чухлĕ «сем-сем» тупса парать те тепĕр куннех сăвă çырма тытăнать...

В. Давыдов сăвви-юррисенче çак мĕскĕн рифмă йăлăхтарсах çитерет. А. Асламаспа çырнă пĕр юрринче рифмăсем пĕтĕмпех çавнашкал «шăрçаланса» пыраççĕ. Кунта эпĕ сăввипех илсе кăтартасшăн, вара поэт кайăксене чунтан юратнине, «юрлар» сăмахсăр пĕр юррине те сиктерсе хăварманнине вулакан хăех, хăй куçĕпе курма пултарать, рифмăсен янăравĕпе те киленмеллипех киленет. Юрă ятне çырса илме маннă, мĕн çинчен каланине кура вулакан хăех ят парĕ ăна.

1. Чĕвĕл чĕкеçсем,
Çепĕç шăпчăксем,
Савăнса юрлаç янкăр
ирхине.
Хастар каччăсем,
Çамрăк пикесем
Васкаса утаç тулă
пуссине.

2. Ылтăн уй-хирсем,
Симĕс вăрмансем,
Тухайса тăраç пирĕн куç
умне.
Çутă кӳлĕсем,
Хумлă тинĕ‹с›сем
Чыс-илем кӳреç
Совет çĕршывне.

3. Ырă шухăшсем,
Çĕнĕ ĕмĕтсем
Ялкăшса çунаç пирĕн
чĕрере.
Хаклă тантăшсем,
Çывăх тусăмсем,
Мухтаса юрлар чаплă
ĕмĕре.

«Çурхи сăнсем» юрра та илсе кăтартам, вăл пысăк мар, нумаях вырăн йышăнас çук.

1. Ырă-çке çуркунне.
Ылтăн хĕвел йăл кулать,
Шăнкăр-шăнкăр шыв
юхать.

2. Ешĕл сад пахчинче
Чăпар куккук аватать,
Шăпчăк юрă шăрататать.

3. Ырă-çке çуркунне
Чун савнипе тĕл пулма,
Унпа ăшшăн калаçма.

Куратăр ĕнтĕ, тĕнче хăй вырăнĕнчех — куккукĕ те, шăпчăкĕ те, ешĕл сачĕ те. Кунта поэт «Ырă-çке çуркунне» тет, «Кимĕре» юрăра «Епле ырă-çке чуна!» тет, «Сарпике» юрăра «Эх, мĕнле хитре каччăпа хĕре!» тенĕччĕ. Анчах калаççĕ-ши ун пек чăвашла? Ку таранччен илтменччĕ, тен, калаççĕ те пулĕ — каччăпа хĕре çулăм хыпса илнĕ чухне, вĕсем «Эх, мĕнле хитре пире!» тесе персе яма та пултараççĕ-и, тен. Поэт пĕр сăвăра: «Ырă шухăшсем, çĕнĕ ĕмĕтсем ялкăшса çунаç пирĕн чĕрере» тет пулсан, тепринче: «Çиçтĕр ĕмĕр ырă ĕмĕт чĕрере» тет. «Вăйлă пулнă тырăпулă тинĕс евĕр хумханать» («Пирĕн председатель»). «Тинĕс евĕр ылтăн тырă... Çĕкленет чĕре. Пурăнмашкăн мĕнле ырă, çамрăксем, пире». «Вăй-хал хурсан, пурнăç пулать. Эй, атьсемĕр, тантăшсемĕр, чунăм савăнать. («Чунăм савăнать»). «Сад пахчийĕ чечек сарчĕ, мĕнле ырă сывлама. Савнă тусăм, эс тухсамччĕ пĕрле юрă юрлама». «Пирĕн савăк юрă вĕçтĕркайтăр инçене» («Каçхи илем»). Куратпăр ĕнтĕ, поэт пĕр сăмахах сăвăран сăвва сĕтĕрет, çĕнни нимĕн те шырамасть. Çак кăлтăксем поэт хăйĕн ответлăхне чакарнипе, чĕлхе тирпейлĕхĕшĕн кĕрешме пăрахнипе пулнă. Пĕр çавăншăн кăна!

Г. Ефимов нумай лайăх юрăсем çырчĕ. Тĕрĕсрех каласан, пирĕн композиторсем унăн сăввисене нумайăшне юрă турĕç темелле. Хăй вăл çав сăвăсене çырнă чухне вĕсем юрă пуласси çинчен, тен, шутламан та пулĕ. Шăпах çавăн çинчен калать те ĕнтĕ М. Исаковский: «Сăвăран юрă хывнă, вăл юрра пĕтĕм халăх пĕлет. Анчах çав юрă пулса тăнă сăвва сценă çине тухса вулама та пул-

тăр, унăн хăйĕн сăвă пĕлтерĕшĕ ан çухалтăр. Çавăн пек сăвă вăл чăн-чăн сăвă, унран юрă тунă пулсан вара унăн кун валли те кирлĕ пахалăхсем çителĕклех пулнă темелле». Г. Ефимов партипе Аслă Ленин çинчен, Тăван çĕршыв çинчен, çамрăксен туслăхĕ-юратăвĕ çинчен нумай лайăх сăвă-юрă панă. Анчах эпĕ ун пирки те мухтав чанне çеç çапса янраса тăрасшăн мар,— хăш-пĕр çитменлĕхсене кăтартса парасшăн. Ман шутпа вĕсем çаксем: чĕлхери кăлтăксем, пĕрре каланинех тепре калани.

1960 çулхи «Ялавăн» 3-мĕш номерĕнче Ефимовпа Фандеевăн «Ленин пирĕнпе», 4-мĕш номерĕнче Ефимовпа Лукинăн тепĕр юрри пичетленнĕ. Икĕ юрри те чылай енчен пĕр пек: хушса юрламаллисем пушшех те. «Партие ӳстернĕ аслă Ленин, апла Ленин пирĕнпе ялан». «Ленина умрах куратпăр, Ленин пирĕнпе ялан». Кунта та каллех «çĕклет» сăмах тĕл пулать: «Ку вăл парти панă аслă тивĕç, çав çĕклет-çке пирĕн вăй-хала». «Çунатлă ĕмĕр çыннисем» юрăра та «Чапа ĕçпе çĕкленĕ, пире вăй панă Ленин», унтан: «Улăп пек ман çĕрĕм-шывăм, çĕкленет кунран-кунах»; «Атăл хумĕсем» ятлă юрăра «Çавăнпалах-çке манăн кăмăла çĕклентереççĕ Атăл хумĕсем» тенĕ. Çакă вăл хамăра хамăр асăрхама пăрахнипе пулать.

Юлашки вăхăтра юрату çинчен çырнă сăвви-юррисенче поэт çĕнни нимех те калаймарĕ. Вĕсем пурте çак «урампа иртсе пыруçăн» пекрех сăвă-юрăсем.

Шыв та шыв пек туйăнмарĕ—
Хăват пачĕ вăл мана.
Куçусен хĕрӳ кăварĕ
Чуна илчĕ тыткăна.

Пĕр сăмах та чĕнеймесĕр
Эпĕ кайрăм урампа.
Пăхса юлтăн хыçран эсĕ
Ырă, ăшă кăмăлпа.

Урампа иртсе пыруçăн
Кантăкра шырап сăнна.
Шыв парас пек, çырă куçăм,
Туйăнатăн халь мана.

Шалт тĕлĕнмелле, темĕн тума çырнă ку юрра! Кашни пĕчĕк сăвă-юрăрах мĕн те пулин çĕнни пулмаллине пĕлетпĕр вĕт-ха эпир. Анчах пĕле-тăркачах çыратпăр та пичетлесе кăларатпăр, вулакансене вуласа киленме сĕнетпĕр. Юлашкинчен тепĕр асăрхаттару: поэт сăвви-юррисенче «çке» татăк часчасах тĕл пулаканччĕ, халĕ вăл çав чиртен хăтăлса пырать темелле, анчах пĕтĕмпех мар-ха. «Ялти тĕрленчĕксем» кĕнекере (Чăвашгосиздат, 1961) вун тăватă «çке», вĕсенчен саккăрăшне йĕркере сыпăк çитмен пирки кĕртсе лартнă. Сăмах майĕн каласан, вăл пирĕн ытти поэтсен те сук мар. Эпир ăна Уйăп Мишшинне те час-часах асăрхатпăр, çамрăксен вăл кашни сăвăрах пулать темелле. Хисеплĕ А. Алган 1961 çулта тухнă «Пурнăç таппи» ятлă кĕнекинче вăтăр икĕ «çке», вĕсенчен çурри ытла — паразитсем.

Н. Евстафьев юрă тексчĕсене вырăсла куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçлет, хăй те нумай çырать, анчах вĕсенчен чылайăшĕ пулсах çитеймеççĕ темелле, вĕсенче поэзи çулăмĕ ялкăшмасть, тĕрĕссипе — вĕсем юрланмаççĕ. «Тăван Атăлăн» 1-мĕш номерĕнче (1961) Н. Евстафьевпа М. Александровăн (çамрăк композитор пулас) «Ăмăртса ĕçлекенсен юрри» çапăнса тухнă. Ятĕнчен вăл питех те хавхалантаракан юрă пулмалла пек, анчах вулатăн та... салху пусса илет. Юрăри тăватă куплетран кирек хăшне илсен те, вĕсем пурте—проза. Юлашки куплета кăна илер:

Ăмăртуллă ĕçĕн ырлăхне
Туллиех куратпăр ку чухне.
Ик колхоз та ĕç çинче хастар,
Малашне те туслăн ăмăртар.

Колхоз стена хаçатĕнчен çырса илнĕ тейĕн ку сăвва, урăх нимĕн те мар.

Ф. Лукинпа пĕрле çырнă «Ĕç маякĕсем» юрăра С. Шавлы «Тырă-пул кашлатăр уçнă çерем хирсенче. Чун-чĕре юрлатăр пысăк сĕтел хушшинче»,—тет. Тыр-пулăн мĕншĕн уçнă çерем çинче çеç кашламалла вара? Тахçантанпах акса тăнă çĕрсем çинче мĕнле вара, начар пулмалла-и? Тата мĕнле сĕтел вăл, чун-чĕре юрламалли пысăк сĕтел?

Виççĕмĕш куплетра: «Маяксем çутатпăр халăхсем утас çула» тенĕ. Мĕне пĕлтерет-ха çапла калани? Шухăша уççăн каламан пирки, сăвва ăнланма йывăр.

И. Малгайăн Г. Лебедевпа çырнă «Ленинла комсомол» юрринче: «Инçетрен-инçетрен сахал мар çĕршывран кунталла саламсем ыткăнаççĕ» тенĕ. Пĕлес килет, мĕнле ыткăнма пултараççĕ-ха вĕсем, саламсем?

Çамрăксем ытларах юрату çинчен çыраççĕ. Анчах вĕсен сăвви-юррисенче юрату яланах пĕр пек темелле: е каччăпа хĕр пĕр-пĕринчен вăтанса çăвар уçма хăяймаççĕ, е каччă хĕрĕшĕн асапланса çӳрет т. ыт. те. Ун пек юрăсен шучĕ те çук пуль ĕнтĕ. Эпир вара вĕсен хисепне ытларах ӳстерме тăрăшатпăр. «Ялавăн» 5-мĕш номерĕнче (1961) М. Волковăпа П. Михайловăн «Кантăкна уçсамччĕ», Ю. Петровпа М. Ильинăн «Кӳршĕ ял хĕрне», В. Дмитриевпа Т. Ивановăн «Икĕ хурăн» юрри пичетленнĕ. «Икĕ хурăн»— ниме те тăман япала. Шухăшĕ — «хурăнсем чунтан кĕтеç пире». Сăвă йĕркисем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăмаççĕ, саналанса каяççĕ.

«Çуммăн ӳснĕ икĕ йăрăс хурăн
Айĕнче юман ураллă сак.
Сар хĕрсем епле юрлатчĕç юрă,
Эпир калаçаттăмăр ларса».

Юрăра «хурăн айĕнче» пĕр йĕркере пулмалла, ăна уйăрма юрамасть. 2-мĕшпе 3-мĕш, 3-мĕшпе 4-мĕш йĕркесем те пĕр-пĕринпе çыхăнса тăмаççĕ. Ытти строфисем те çавнашкал.

«Кантăкна уçсамччĕ» юрăра М. Волкова çапла çырать:

Эп хиртен кĕретĕп,
Савнă çĕмĕрт куç.
Юрататни, çук-и,
Кантăкначчĕ уç.

«Юрататни, çук-и, кантăкначчĕ уç». Юратать пулсан, уçать, çук пулсан, уçмасть, тейĕпĕр. Автор каланă тăрăх, юратмасан та, пурпĕрех уçмалла иккен. Çук сав-

юратмасть пулсан, уçмасть ĕнтĕ... «Кантăкначчĕ уç». Кам калаçать-ха çакнашкал? Кун пек калас пулсан, киноначчĕ пыр, мунчаранччĕ тух темелле вĕт ара! Çамрăк поэтессă чĕлхене пăскалани унччен те пулкаланăччĕ. «Чĕнтĕрлĕ калинкке умĕнче» юрăра: «Темшĕн эп кантăка уçсанах чарăнать купăспа вылямa» тенĕччĕ. Купăса калаççĕ пуль ăна!

Ю. Петровăн М. Ильинпа çырнă «Кўршĕ ял хĕрне» юрринче те— каччă тунсăхĕ. М. Волковăпа унăн йĕркисене юнашар çырсан та нимĕн те пулмасть, шухăшĕ пăсăлмасть, пачах урăхла, тата витĕртерех палăрать.

«Кăшт хăть тунсăхлан-ши
хушăран» (Ю. Петров).
«Виç сăмах çеç ăпшăн каласчĕ
ман» (М. Волкова).

Шел те, çамрăксен юрату юррисем ытла та пĕр пек, пĕр калăплă. Шухăшĕсем те, сăмахĕсем те кивĕ. Çак юрăсене пĕрне те пичетлесе кăларма кирлĕ пулман. Вĕсем пирĕн туйăмсене пĕр тумлам та пуянлатмаççĕ.

Çамрăксем çеç мар, аслăраххисем, опытлăраххисем те, ман шутпа, час-часах çырас килмен çĕртен çыраççĕ, чĕлхе тути-масине пĕлеççĕ пулин те, сăмаха «сĕтĕре-сĕтĕре», ун тутине яраççĕ. Акă А. Галкинăн «Эс ăçта-ши халь, тусăм!» сăввин юлашки куплечĕ.

Ах, килсемччĕ, пикеçĕм,
Таврăнсамччĕ, хĕвелçĕм,
Канăç çук пĕр самант та
пулмасассăн эс ман çумра.
Кил хăвăртрах,
Килсем часрах!

Автор çак «пикеçĕм», «хĕвелçĕм» сăмахсемпе çыннăн ырă туйăмĕсене хускатасшăн пулнă, анчах вĕсем чĕрен пĕр хĕлĕхне те сĕртĕнмеççĕ, ачашламаççĕ, тутăхнă çурла пек çеç пырса тирĕнеççĕ.

Юрă сăмахĕсем çыракансем пирĕн нумай, пурин çинчен те калаймарăмăр ĕнтĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, сăмаха çапла пĕтерес килет: пирĕн, поэтсен, ку тĕлĕшпе хамăрăн ответлăха ўстерес пулать, чĕлхене тирпейлĕ тытмалла, чĕлхе илемлĕхне халăх сăмахлăхĕнчен вĕренсе пымалла, юрă тума пĕрре илтсех асра юлакан сăмахсем çырмалла. Пичете юрăхсăр сăвăсене— ку чи малтан çамрăксене пырса тивет — композиторсем патне йăтса кайса, юрă хывма сĕнмелле мар. Композиторсен хăйсен те юрă текстсĕсене тиркеме пĕлмелле, пулипулми япаласене хыпăнса ярса тытмалла мар. Вара тин эпир лайăхран та лайăхрах юрăсем шăранса тухнине илтсе савăнăпăр!